Пĕрлехи информаци кунĕ

Ĕçсем те нумай, ыйтусем те чылай

Юн кун, ноябрĕн 18-мĕшĕнче, районта информаци кунĕ иртрĕ. Муркаша «Росгосстрах – Поволжье» – «Чăваш Республикин тĕп управленийĕ» пĕрлешӳ филиалĕн директорĕ Алексей Геннадьевич Пирожков тата Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Медтехника» уçă акционерлă общество директорĕ Виктор Степанович Стародубцев килсе ситрĕç. Вĕсем малтанах район пуçлăхĕпе тĕл пулса информаци кунĕн тĕллевĕсем пирки калаçрĕç.

Информаци кунĕ Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д. Медведев РФ Федераллă Пухăвне тухнă çырура палăртнă задачăсене Чăваш Республикинче пурнăçласси тавра пулчĕ. Кунсăр пуçне тĕл пулусенче республикăри хуласемпе районсен экономикăпа социаллă аталанăвĕ тата социаллă пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парасси пирки те сăмах хускатрĕç.

Виçĕ ĕç ушкăнĕ районти тĕрлĕ вырăнсене тухрĕ. Пĕрремĕш ушкăнра «Росгосстрах – Поволжье» – «Чăваш Республикин тĕп управленийĕ» пĕрлешӳ филиалĕн директорĕ А.Г. Пирожков тата район администрацийĕн пурлăх тата çĕр ресурсĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.В. Петров пулчĕç. Вĕсем Муркашри БТИ-нче тата «Росгосстрах – Поволжье» – «Чăваш Республикин тĕп управленийĕ» пĕрлешӳ филиалĕн районти уйрăмĕнче ĕç коллективĕсемпе тĕл пулса çӳлерех асăннă ыйтусем тавра калаçрĕç. Çĕр пайĕсемпе, куçман пурлăха регистрацилессипе тата çак ĕçе мĕншĕн пурнăçламаллипе интересленчĕç коллективсенче. Пур ыйту çине те татăклă хуравсем пулчĕç.

Иккĕмĕш ушкăнра Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, «Медтехника» уçă акционерлă общество директорĕ В.С. Стародубцевсăр пуçне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, район администрацийĕн информацине тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхĕ В.Г. Лаврентьев, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн тĕп специалист-экспертчĕ Г.Г. Симаков пулчĕç. Вĕсем малтанах «Сывлăх» ФСК ĕçĕпе паллашрĕç. Виктор Степанович çак комплекс паян çынсемшĕн, уйрăмах çамрăксемшĕн, питĕ кирлине палăртрĕ. Искусство шкулĕ те кунтах вырнаçни депутата килĕшрĕ. Çак çурта вăхăта усăллă ирттерме килекенсем пĕр-пĕрин çитĕнĕвĕсене курма пултарни те аваннине палăртрĕ вăл. Çуртпа эффективлă усă курассипе çеç тимлемелле.

Хыççăн çак ушкăн Москакассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕ. Медицина ĕçченĕсене пăшăрхантаракан ыйтусем сахал мар. Тĕп ыйтăвĕ вара чирлисем патне тухса çӳремелли машина питĕ кивĕ пулни. «Çак машинăна улăштарсан аван пулмалла. Мĕншĕн тесен пĕррехинче унпа çула тухсан пире патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсем чарчĕç. Ку машинăпа трасса çине тухмалла маррине асăрхаттарчĕç», – теççĕ вĕсем. Тепĕр ыйту та пур-ха Москакассинчи медицина ĕçченĕсен. Кунта шăл тухтăрĕ çамрăк та ăста специалист. Ăлли çыпăçать унăн, теççĕ Валентина Смелова пирки. Врач патне таврари çынсем кăна мар, Шупашкартан та, кӳршĕллĕ пурăнакан çармăссем те килеççĕ иккен. Оборудовани çине пăхсан вара лайăххине шанмалла кăна. «Ку ыйтусемпе малтанах район шайĕнче ĕçлемелле. Татса памалла мар ыйтусем мар вĕсем. Медицина техникине ĕçлеттерессипе, ăна пăхса тăрассипе вара «Медтехника» яланах пулăшма хатĕр», – терĕ В.С. Стародубцев. Район пуçлăхĕ те медицина ĕçченĕсене çак ыйтусене кая юлмасăр Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕпе сӳтсе явма сĕнчĕ. Пулăшу пуласса шантарчĕ.

Маршрутăн тепĕр чарăнăвĕ çĕнĕ полигон патĕнче пулчĕ. Ивановка ялĕ çывăхĕнчи йăла каяшĕсен полигонĕнчи ĕçсем епле пынипе район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов паллаштарчĕ. Республика шайĕнчи социаллă пĕлтерĕшлĕ объектра ĕçсене вăхăтра пурнăçлассипе тимлени тӳрех курăнчĕ. Котлован тĕпне гидроизоляци материалĕпе хупланă, çур метр таран тăмлă çĕрпе витнĕ, дренаж сарнăччĕ те ĕнтĕ. Техника та çителĕклĕ. Муркашсем малашлăха пăхса ĕçленине ырларĕ çеç Виктор Степанович.

Каярах «Сеспель» предприяти цехĕсенче пулнă май та кунта ĕçе аван йĕркеленине палăртрĕ вăл. Паллах, кризис витĕмне курма тӳр килчĕ предприятин. Анчах та сентябрь уйăхĕнчен тытăнса заказсем кăшт хушăнни те савăнтарать. Пĕр вырăнтах ĕçе пуçламăшĕнчен вĕçне çити туни производствăра пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ĕçсене шăпах çакна ăнланса, пурнăçа пĕр утăм маларах курса йĕркелени, кунта çирĕп дисциплина пулни те шанчăка пĕтме памасть.

Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансен виççĕмĕш ушкăнĕ Хорнуй ял тăрăхĕнче пулчĕ. Ял тăрăхĕн администрацийĕнче ял çыннисемпе тĕл пулчĕ. Муркаш район нотариусĕ П.И. Шлаев хăйĕн сăмахĕнче Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Д.А. Медведев РФ Федераллă Пухăвне янă Çыру, унта палăртнă задачăсем çинче чарăнчĕ. Çавăн пекех Павел Иванович Чăваш Республикин экономикипе социаллă пурнăçне аталантарма тата социаллă пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса пама палăртнă хушма мерăсемпе те паллаштарчĕ. Вăл çакна палăртрĕ. Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн черетсĕр 23-мĕш сессийĕнче кăçалхи бюджета улшăну кĕртнĕ. Унпа килĕшӳллĕн республикăн кăçалхи бюджечĕн тупăш пайĕ 1 млд. та 60 млн. тенкĕ чухлĕ ӳсет. Вĕсенчен 424,5 млн. тенкине бюджет дефицитне чакарнă çĕре яма палăртнă, 635,6 млн. тенкине – паянхи приоритетлă задачăсене пурнăçлама. Урăхла каласан, халăхăн социаллă гарантийĕсене тивĕçтерме, социаллă сферăпа обществăлла инфраструктурăна йĕркеллĕ ĕçлеттерме, ытти ыйтусене татса пама. Çавăн пекех Раççей Федерацийĕн бюджетĕнчен килекен укçатенкĕ сумми те палăрмаллах пысăкланать.

Район администрацийĕн йĕркелӳпе кадр, право ыйтăвĕсене тивĕçтерекен тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе ĕçлекен пай ертӳçи Л.Ю. Тарасова пуçтарăннисене район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ. Районта халĕ çитес çулхи район бюджетне йĕркелес ĕç пынине, ноябрĕн 20-мĕшĕнче ăна халăхпа итлеме палăртнине асăнчĕ. Лилия Юрьевна çавăн пекех паян ĕççĕр юлнисене хăйсене ĕçпе тивĕçтерес ĕçре патшалăх пулăшни, районта çӳп-çап тăкмалли çĕнĕ полигон туни, 131-мĕш федераллă саккун çинче чарăнса тăчĕ. Çитес çул Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитет. Хатĕрленӳ ĕçĕсем районта епле пыни çинчен те пулчĕ сăмах.

Тĕл пулура сăмах хаçат-журналсене çитес çулхи 1-мĕш çур çулта илсе тăма çырăнасси çинчен те пулчĕ. Пуçтарăннисем район хаçатне те сĕнӳсем пачĕç.

– Çамрăксене алкоголизмран, наркоманирен, ытти сиенлĕ йăларан пăрма пулăшакан материалсем ытларах пулсан аванччĕ, – терĕç вĕсем.

– Хĕрсене кирлĕ сĕнӳсем, хĕрарăмсемшĕн усăллă канашсем час-часрах курас килет унта, – хушса каларĕç теприсем.

Пуçтарăннисем Муркаш çĕнĕрен каласма пуçланăшăн кăмăллă пулнине палăртрĕç, çакăншăн район администрацине тав турĕç.

– Передачăсене кĕтсе кăна тăратпăр. Чуна хускатакан, кулленхи пурнăçра кирлĕ темăсем хускатаççĕ унта, – терĕ ял тăрăхĕн тĕп специалист-экспертчĕ М.М. Исакова.

Пĕрлехи информаци кунне Хорнуйсем йышлăн пуçтарăнчĕç. Вĕсене алкоголизм, тавралăха тирпей-илем кĕртес, вырăнти çулсене тăвас, тытса тăрас ĕçсем кăсăклантараççĕ.

Садовая урамри çул йĕркеллех марри те пăшăрхантарать вĕсене.

Ял администрацийĕ вырăнти ял хуçалăх предприятийĕпе пĕрле татса памалли ыйтусем те çук мар кунта. Тĕл пулура хуçалăх ертӳçи О.П. Яндимиркин ку ыйтусене татса пама май пулнине палăртрĕ.

Палăртмалла, çитес çулхи район бюджечĕ кăçалхинчен пĕчĕкрех. Ял тăрăхĕсен те вăл çаплах.

Çавăнпа та ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.А. Любимова палăртнă ĕççесене пурнăçласах тесен вырăнта хăйсен те пуçарулла, тăрăшуллă пулмаллине палăртрĕ. Палăртнă ĕççем кунта вара вĕсен çителĕклех. Çав шутран Тойкилтĕри Культура çуртне юсасси те, тата ытти те.

Пуçтарăннисем вырăнти пурнăç тулăхрах та туллирех пултăр тесе çунса тăни яр уççăн курăнать. Апла пулсан вырăнти ыйтусене кунта хăйсене кирлĕ пек тĕрĕс татса парас шанчăк пысăк.

Н. НИКОЛАЕВА,
Л. ПАВЛОВА.

Çеçпĕл Мишши юбилейне халалласа

«Асран кайми чăваш поэзийĕн ăсти»

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче чăвашсен паллă поэчĕ Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул тултарчĕ. Çавна халалласа Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотека «Асран кайми чăваш поэзийĕн ăсти» ятпа поэзи каçне ирттерчĕ. Унта район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн пуçлăхĕ А.Е. Андреева, районти библиотекăсен библиотекарĕсем, чăваш чĕлхипе литературин учителĕсем, районти «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе» конкурс-викторина тата сăвă вулакансен конкурсĕн çĕнтерӳçисем, кунпа пĕрлех Муркаш лицейĕнче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Кунтах кĕнекесен «Чăваш поэзийĕн ăсти» экспозицине йĕркеленĕчĕç.

Çак мероприятие хутшăнакансем валли ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотека закладкăсем, буклетсем хатĕрленĕ. Çеçпĕл Мишшине халаллана электронлă презентацисемпе те паллашма интереслĕ пулчĕ. Муркашри краеведени музейĕ Çеçпĕл музейĕн видеоэкскурсине йĕркеленĕ. Калайкасси шкулĕн учителĕ, халăх академикĕ Е.Е. Ерагин поэта Украина çĕрĕ çинче мĕнле чыслани пирки каласа пачĕ.

Савăнăçлă лару-тăрура «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе» конкурс-викторина тата сăвă вулакансен конкурсĕн çĕнтерӳçисене чысларăмăр, парнесем патăмăр. Хăйсен ушкăнĕсем хушшинче конкурс-викторинăра Муркаш шкулĕнчи Евгений Григорьев тата Снежанна Конузина, Ярапайкасси шкулĕнчи Юлия Антонова çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Иккĕмĕш вырăнта Муркашри Наталья Крючкова, Сосновкăри Надежда Алексеева, Çатракассинчи Надежда Димитриева, виçĕмĕшĕнче Калайкассинчи Марина Волкова тата Кристина Арчикова.

Э. ДИМИТРИЕВА,
районти тĕп библиотекăн сектор ертӳçи.

Ыйту – хурав

Минимум иккĕ пулать

Нумай пулмасть Чăваш Енре пенсионерсем валли 2010 çулхи пурăнма кирлĕ минимума палăртрĕç. Малашне çак минимума çулталăкра пĕр хут кăна палăртаççĕ. Унччен вара кварталта пĕр хут палăртнăччĕ вĕт-ха?

М. ВАСИЛЬЕВА.

Халĕ вара пенсионерсен пурăнма кирлĕ минимум иккĕ пулать. Республикăри Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствинче ăнлантарса панă тăрăх, федераллă саккунпа килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче çуллен пенсионерăн пурăнма кирлĕ минимумне палăртаççĕ. Çак минимума палăртнă чухне пенсионер апатланма мĕн чухлĕ укçатенкĕ тăкакланине, пулас инфляция шута илеççĕ. Унпа вара ватлăха пула, инвалида тухнипе тата çемьере тăрантаракана çухатнипе пенси çумне социаллă хушма тӳлев панă чухне усă кураççĕ. Аса илтеретпĕр: ку хушма тӳлевсене 2010 çултан пуçласа пама тытăнаççĕ.

Пурăнма кирлĕ тепĕр минимума республика правительстви кашни квартал валли социаллă демографин виçĕ ушкăнĕ тĕлĕшпе палăртать. Унпа социаллă программăсем туса хатĕрлесе вĕсемпе усă курнă чухне республикăра пурăнакансен пурнăç шайне хак пама, чухăн пурăнакансене социаллă пулăшу пама, социаллă тӳлевсем уйăрма (сăмахран, пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн субсидисем, ача пособийĕсем пама) усă кураççĕ. Асăрхаттармалла, асăннă тĕслĕхре «пенсионерсем» категорие ватлăха пула пенси илекенсемпе 1-мĕш тата 2-мĕш ушкăн инваличĕсем кăна кĕреççĕ.

Обществăлла организацисенче

«Шурă туя» уйăхлăх иртрĕ

Йĕри-тавралла сăнасарах пăхар-ха. Мĕн тери илемлĕ вăл çут тĕнче! Шурă юрпа витĕннĕ симĕс чăрăшсем, янкăр тӳпери кăтра пĕлĕтсем, улăх-çаран... Çак илемлĕхпе пурте киленеймеççĕ пирĕн хушăра. Чунпа туйсан та, курмаççĕ вĕсем.

Шурă туяллă ватăсемпе çулланнă çынсене сахал мар куратăр эсир кунсерен. Тĕрлĕ ĕçпе тĕрлĕ кантура килеççĕ вĕсем район центрне. Анчах та Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин вырăнти организацине кĕрсе тухмасăр килĕсене тавраннă васкамаççĕ. Хăйсен савăнăçне те, чĕрери йывăр суранне те кунта пĕрле пайлаççĕ.

Ку вăхăта организаци Муркашпа Элĕк тăрăхĕсенчи куç янăх куракан 218 çынна пĕрлештерсе тăрать. Çак кунсенче вара шурă туяллă çынсене ытти чухнехинчен ытларах курма май килчĕ. Çавна май куç янăх куракансен вырăнти организацийĕн ертӳçипе Анастасия МИХАЙЛОВАПА сăмах пуçартăмăр.

– Мĕнле сăлтавпа çыхăннă-ха куç янăх куракансене Муркашра ытларах тĕл пулни?

– Эсир асăрхани ăнсăртран мар. Çулталăкăн çак тапхăрĕнче 1987 çултанпа Раççейре «Шурă туя» ячĕ палла тăваççĕ. Çакна халаллана уйăхлăх октябрĕн 15-мĕшĕнчен тытăнса ноябрĕн 13-мĕшĕччен пырать.

Шурă туя – куç курман çынăн шанчăклă пулăшуçи. Ăна пĕтĕм тĕнчипех куç курман çынсен палли тесе йышăннă. Шурă туяллă е хура куçлăх тăхăннă çынна куратăр пулсан, ăна мĕнле те пулсан пулăшу сĕнесчĕ: е çул урлă каçма пулăшасчĕ, е тĕрлĕ кантурсене кĕме те... Тата календарьте ноябрĕн 13-мĕш кунне Пĕтĕм тĕнчери куç курманнисен кунĕ тесе палăртнă.

– Эсир те тĕплĕн хатĕрлентĕр пулĕ çак куна?

– Паллах. Вырăнти организацин бюро ларăвĕнче туса ирттермелли тĕрлĕ ĕçсен планне туса хатĕрлерĕмĕр. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Муркашра, тепĕр кунне Элĕкре канăççăр чунлă ВОС активисчĕсем пĕрле пухăнчĕç. Хамăрăн обществăн историне аса илтĕмĕр, интереслĕ викторина та пулчĕ. Ас-тăна çирĕплетес тесен, куç курман çынсен илтнине хăвăрт та тĕплĕн астуса юлма тивет. Вĕсем тепĕр хут кураймаççĕ те, вулаймаççĕ те. Час-часах аса илни вара – пысăк пулăшу. Хамăр ВОС членĕсен пултарулăхне тĕрлĕрен реабилитаци ăмăртăвĕсенче те тĕрĕслерĕмĕр. Тĕл пулăва хăйсен ал ĕçĕсене те илсе килекенсем пулчĕç – выставка йĕркелерĕмĕр. Пирĕн пата 333-мĕш кабинета кĕрсенех стена çинче «Ырă алăсен ĕçĕсем» выставка пур. Куç янăх куракансен алă ĕçĕсем çаксем пурте.

– Вĕсенчен хăшĕсене те пулин палăртса хăварма пулать-и?

– Алă ĕçĕсем пурин те хăйсене евĕрлĕ. Вĕсенче çынсен чун илемлĕхĕ, чун ăшши палăрать. Çак ĕççене куç янăх куракан е курман çын тунă тесе калама та йывăр. Эпир Аня Столярован, Вячеслав Пагеевăн, Елена Пушкинан, Нина Кудрявцеван, Маргарита Пушкареван, Вера Горланован тата Рая Беляеван ĕçĕсемпе мухтанатпăр. Хамăр патра кăна мар, республикăра та маттур вĕсем. Тĕрлĕ курав-сене хутшăнса вĕсен ĕçĕсем дипломсене те тивĕçеççĕ.

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Хусанта Пĕтĕм тĕнчери куç курманнисен обществин Атăл тăрăхĕнчи зонин «Çĕнтерӳ салючĕ» фестивалĕн 3-мĕш тапхăрĕ иртрĕ. Владимир Александров ертсе пыракан арçынсен пултарулăх ушкăнĕ унта ăнăçлă хутшăнчĕ.

Ноябрĕн 14-мĕшĕнче Шупашкарти Л.Н. Толстой ячĕллĕ библиотекăра куç курман инвалидсем хушшинче «Асамлă Луи Браль пăнчисем» конкурс пулса иртрĕ. Унта та пирĕн ВОСăн çамрăк членĕсем Слава Пагеевпа Анастасия Михайлова хутшăнчĕç.

– Сире кулленхи ĕçре пулăшу сĕнекенсем те пур пулĕ?

– Çапла, ĕç планĕсемпе, Чăваш Республикинчи правлени 2009 çул валли хатĕрленĕ реабилитаци планĕпе килĕшӳллĕн хамăр ĕçсене эпир Муркашпа Элĕк районĕсенчи социаллă хӳтлĕх пайĕсемпе тачă çыхăнса туса пыратпăр. Районти тĕп библиотекăпа Культура çурчĕсен ĕçченĕсем те пирĕн йыхрава кăмăллăн йышăнаççĕ. Вулав залĕнче «Ыр кăмăллăх» клубĕ те ĕçлет. Тĕрлĕ литературăпа паллаштараççĕ пире, юрă-сăвăпа савăнтараççĕ. Пенси фончĕн ĕçченĕсем патне те, тĕп больницăсен куç тухтăрĕсем патне те час-часах кайма тивет пирĕн. Яланах ăшшăн йышăнаççĕ, ырă сĕнӳсем параççĕ.

Юлашкинчен вара пурне те ырă сывлăх сĕнес килет. Çывăх вăхăтрах сусăр çынсен кунне те палла тăватпăр. Пирĕн хушăрах тĕрлĕрен сусăрланнă çынсем пурăнаççĕ, нушаллă-тертлĕ пурăнакансем те пур. Турă умĕнче вара эпир пурте пĕр тан, пурнăçра та çапла пултăрччĕ.

«Шурă туя» уйăхлăхĕ иртрĕ пулин те, пирĕн куç курманнисене те манас марччĕ, ытти-сене те пулăшу алли сĕнесчĕ.

В. ШАПОШНИКОВ
каланă.

Итоги конкурса

Администрация Моргаушского района сообщает об итогах проведения открытого конкурса по определению официального печатного издания, осуществляющего публикацию информации о проведении конкурсов и аукционов на право заключения договоров, предусматривающих переход прав владения и (или) пользования в отношении имущества, находящегося в муниципальной собственности Моргаушского района Чувашской Республики

Признать открытый конкурс по определению официального печатного издания, осуществляющего публикацию информации о проведении конкурсов и аукционов на право заключения договоров, предусматривающих переход прав владения и (или) пользования в отношении имущества, находящегося в муниципальной собственности Моргаушского района Чувашской Республики несостоявшимся согласно протокола от 18 ноября и определить печатное издание, осуществляющего публикацию информации о проведении конкурсов и аукционов на право заключения договоров, предусматривающих переход прав владения и (или) пользования в отношении имущества, находящегося в муниципальной собственности Моргаушского района Чувашской Республики – единственного участника, который подал заявку на участие в открытом конкурсе и признан участником открытого конкурса – автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» («Знамя победы») Минкультуры Чувашии, (ЧР, с. Моргауши, ул. Мира, д.9А), по цене опубликования информации - 12,0 (двенадцать) рублей с учетом налога на добавленную стоимость за квадратный сантиметр.